«Наци проекчĕсем – Муркаш районĕнче»

# Хăтлăх ĕçĕсем – кашнин валлиех

**Юлашки çулсенче наци проекчĕсен шайĕнче районта калăпăшлă ĕçсем туса ирттенине пурте лайăх курса тăратпăр. Автомобиль çулĕсене юсаса нормативлă шая çитереççĕ, культура, вĕренӳ, сывлăх сыхлав учрежденийĕсенче капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттереççĕ, вĕсен пурлăхпа техника бази пуянланса пырать, çĕнĕ объектсем те çĕкленеççĕ. Кунпа пĕрлех «Пурăнмалли çурт-йĕр тата хула таврашĕ» наци проекчĕ шайĕнчи «Формирование комфортной городской среды» регион проекчĕпе туса ирттерекен кашни çынна пырса тивекен хăтлăх ĕçĕсене те пурте куратпăр-туятпăр.**

**«Пурăнмалли çурт-йĕр тата хула таврашĕ» наци проекчĕ шайĕнче районта иртнĕ çул туса ирттернĕ тата кăçал пурнăçлама палăртакан çак хăтлăх ĕçĕсем пирки район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ – капиталлă строительство тата общество инфраструктурине аталантарассин пайĕн пуçлăхĕ Алексей МАТРОСОВ каласа пама кăмăл турĕ:**

– «Пурăнмалли çурт-йĕр тата хула таврашĕ» наци проекчĕ шайĕнчи «Формирование комфортной городской среды» регион проекчĕпе килĕшӳллĕн Муркашри «Çĕнтерӳ паркĕ» обществăлла территорире иртнĕ çул калăпăшлă юсав ĕçĕсем туса ирттерме май килчĕ. Хăтлăх ĕçĕсен пĕрремĕш тапхăрĕ шучĕпе кунта ĕçсене пĕтĕмĕшле 7 млн ытла тенкĕлĕх туса ирттернĕ. Ĕçсене пурнăçлама 6 млн та 937 пин тенкĕне яхăн федераци хысниччен уйăрнă. Хăтлăх ĕçĕсене «НПП «Наследие» ООО туса ирттерчĕ.

Асăннă наци проекчĕ шайĕнче эпир хамăр район территорийĕнче кăçал туса ирттерме палăртакан хăтлăх ĕçĕсен калăпăшĕ те пĕчĕк мар. Акă Муркашри «Çĕнтерӳ паркĕ» обществăлла территорире иртнĕ çул хăтлăх ĕçĕсене пĕрремĕш тапхăр шучĕпе туса ирттернĕччĕ. Кăçал кунти ĕçсене вĕçлеме палăртнă. Ĕçсен калăпăшĕ пирки калас пулсан, вăл 4 млн тенкĕлĕхе яхăн пулмалла. Пĕлтĕр кунта çĕр ĕçĕсем пурнăçланă, унчченхи кивĕ çулсене, архитектура формисене пăсса çĕнĕ çулсемпе тротуарсем сарнă тата йĕркеленĕ, архитектура формисене çĕнетнĕ, ларса канмалли беседкăсем, тенкелсем, урнăсем вырнаçтарнă пулсан, кăçал парк йĕри-тавра карта тытма пăхнă, çавăн пекех çĕрлехи вăхăтра парка çутатса тăрассине йĕркелĕç, илемлĕ йывăç-тĕм лартса хăварĕç. Çапла вара район центрĕнчи çĕнелсе илемленнĕ, хăйĕн сăн-сăпатне тĕпрен улăштарнă парк кунта пурăнакансен, Муркаша килсе çÿрекенсен юратнă вырăнĕ пуласси пачах та иккĕлентермест.

Мăн Çĕнтĕрти Аслă Çĕнтерӳ 40 çул тултарни ячĕллĕ парк пирки те асăнса хăвармалла. Кунта та кăçал наци проекчĕ шайĕнче калăпăшлă ĕçсем пуçăнаççĕ. Хăтлăх ĕçĕсене Мăн Сĕнтĕрте сметăпа пĕтĕмĕшле 22 млн тенкĕлĕх туса ирттерме палăртнă. Ĕçсен пĕр пайне кăçал, ыттине хыççăн пурнăçламалла пулĕ.

Районта туса ирттерекен хăтлăх ĕçĕсем наци проекчĕ шайĕнче кăна пулса пымаççĕ. Кунпа пĕрлех Чăваш Республикин 2018 – 2022 çулсем валли пăхса хунă «Формирование современной городской среды на территории Чувашской Республики» патшалăх программи вăйра. Асăннă программа та наци проекчĕпе тӳрремĕнех çыхăннă. Унăн шайĕнчи ĕçсем иртнĕ çул Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2019 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнчи «О дополнительных мерах по повышению комфортности среды проживания граждан в муниципальных образованиях Чувашской Республики» Указĕпе килĕшӳллĕн малалла тăсăлчĕç.

> ***Сăмах май. Асăннă указ шайĕнче туса ирттерекен мероприятисем валли укçа-тенкĕне республика бюджетĕнчен 94 процент, вырăнти бюджетран 5 процент уйăрма пăхнă, граждансен хăйсен тӳпи 1 процент пулмалла.***

Çапла вара пĕлтĕрех Ильинка ял тăрăхĕнчи Тренккăри Новая урамри нумай хваттерлĕ 1-мĕшпе 2-мĕш тата 3-мĕшпе 4-мĕш çуртсем патĕнчи территорие хăт кĕртме май килчĕ. Ĕçсене «КЕРМЕН» ООО пурнăçларĕ. Муниципалитет контракчĕпе палăртнă тăрăх, пĕтĕмĕшле 2 млн та 337 пин тенкĕлĕх ĕç пурнăçланă. Ку шутра ача-пăча тата спорт площадки йĕркеленĕ, тротуар сарнă, территорие симĕслентернĕ тата çĕрлехи вăхăтра çутатса тăмалла тунă. Кирлĕ укçа-тенкĕн ытларах пайне – 2 млн та 197 пин тенкĕ – республика, 116 пин тенкĕ ытла вырăнти бюджетран уйăрнă, вырăнта пурăнакансем тата юридици сăпачĕсем 23 пин тенкĕ ытла пухнă.

Мăн Сĕнтĕр ялĕнчи Новая урам та иртнĕ çул хăтлăх зони пулса тăчĕ. Ку урамра вырнаçнă нумай хваттерлĕ 32-мĕшпе 34-мĕш çуртсем патĕнчи территорире те хăтлăх ĕçĕсем туса ирттернĕ. Ача-пăча площадки йĕркеленĕ, территорие симĕслентернĕ тата çĕрле çутатса тăмалла тунă. Подрядчик – Михаил Павлов уйрăм предприниматель – ĕçсене вăхăтра тата пахалăхлă туса ирттерчĕ. Кунта та контрактпа пăхнă 1 млн та 109 пин тенкĕрен 1 млн та 43 пин тенкине республика бюджетĕнчен уйăрнă. Ытти сумма – вырăнти бюджет укçи-тенки тата ку тăрăхра пурăнакансем 1 процент шучĕпе хăйсем пухни.

Кăçал вара Чăваш Республикин «Формирование современной городской среды на территории Чувашской Республики» патшалăх программи шайĕнче районĕпе пĕтĕмĕшле 12 объектра хăтлăх ĕçĕсем туса ирттерме палăртатпăр. Вăл шутран Оринин ял тăрăхĕнче харăсах 8 объектра ĕçсене 7 млн та 707 пин тенкĕлĕхе яхăн пурнăçлама пăхнă. Сентимĕр, Çеменкасси, Пиккикасси, Тереç ялĕсенче ача-пăча площадкисем, Чамăш, Мулкачкасси, Çĕньял Оринин ялĕсенче спорт площадкисем, Оринин ялĕнче ача-пăча тата спорт площадкисем йĕркелеме палăртнă.

Çавăн пекех Çатракасси ял тăрăхĕнчи Кашмаш шкулĕ патне тротуар тума 3 млн тенкĕне яхăн, Муркаш ял тăрăхĕнчи Ленин урамĕнчи 26, 28 тата 30-мĕш çуртсемпе Хĕрлĕ тӳремри 4-мĕшпе 6-мĕш çуртсем патĕнчи территорие хăтлăлатма 5 млн тенкĕ ытла, Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Шурча ялĕнче ача-пăча тата спорт площадки йĕркелеме 2 млн тенкĕне яхăн, Мăн Сĕнтĕрти Новая урамра тротуар сарма 3 млн тенкĕ ытла уйăрма пăхнă.

Районĕпе вара указ шайĕнче хăтлăх ĕçĕсем ирттерме кăçал 20 млн та 943 пин тенкĕ ытла уйăраççĕ. Кунта çакна та каласа хăварас пулать. Ку сумма – контрактпа пăхнă ĕçсен малтанхи хакĕ. Апла пулсан аукцион ирттернĕ хыççăн ĕçсен хакĕ кăштах чакма та пултарать.

> ***Сăмах май. Раççей Строительство министерстви «Пурăнмалли çурт-йĕр тата хула таврашĕ» наци проекчĕ шайĕнче 2022 çулта хăт кĕртме палăртакан объектсене суйласа илессипе сасăлав ирттерме ятарлă платформа йĕркелерĕ. 14 çул тултарнă граждансен сайтра кăçалхи апрелĕн 26-мĕшĕнчен тытăнса майăн 30-мĕшĕччен хăйсем суйласа илнĕ объектшăн сасăлама май пулать. Сасăлав ирттерме волонтерсене анлăн явăçтарма палăртаççĕ.***
>
> ***Асăннă мероприятие йĕркелесе ирттерме Чăваш Республикинче ĕç ушкăнĕ туса хунă. Çитес çул муниципалитет программисен шайĕнче хăтлăх ĕçĕсем туса ирттермелли объектсемшĕн Интернет сетĕнче электрон майпа сасăлама май пулать. Республикăри муниципалитет йĕркеленĕвĕсем онлайн сасăлава хутшăнакан объектсен переченьне туса хатĕрленĕ ĕнтĕ. Çак вăхăта информацие платфорmăна вырнаçтарнă. Апла пулсан хамăр пурăнакан тавралăха илемлĕрех, пурăнма хăтлăрах тăвассипе проектсене суйласа илме, хамăрăн шухăша пĕлтерме кашниех хутшăнма тăрăшар.***

**Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**

Апрелĕн 12-мĕшĕ – Космонавтика кунĕ

# Пуриншĕн те питĕ пĕлтерĕшлĕ кун

***1961 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕнче СССР гражданинĕ Юрий Гагарин этемлĕх историйĕнче чи малтан «Восток» космос карапĕпе çĕр чăмăрĕ тавра вĕçсе çаврăннă. Çак событи нихăш ĕмĕрте те манăçа юлас çук. Вăл чăн-чăн паттăрлăхпа хăюлăх тĕслĕхĕ кăна мар, кунпа пĕрлех çакă пирĕн çĕршыв наука тата технологи аталанăвĕ енĕпе чи малта пулнине кăтартса панă***



**Сăн ӳкерчĕкре: Андриян Николаевпа Юрий Гагарин космонавтсем хатĕрлемелли ятарлă программăпа килĕшӳллĕн парашютпа сикме хатĕрленнĕ вăхăтра.**

Паянхи куна космосра пулса курнă çынсен шучĕ 600-е çитет. Çĕр тавра халĕ 5 пин спутник вĕçет. Вĕсем тĕрлĕ ĕç пурнăçлаççĕ: наука тĕпчевĕсем кăна ирттермеççĕ, çавăн пекех производствăпа çыхăннă ĕç те пурнăçлаççĕ, ял хуçалăхне тата транспорт системине пулăшаççĕ, çанталăк улшăнăвĕпе вăрман пушарĕсем пирки хыпарлаççĕ т. ыт. те.

Пирĕншĕн, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăн çуралнисемшĕн, çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ 2 праçник пур. Кусем вĕсем майăн 9-мĕшĕ – Çĕнтерӳ кунĕ тата апрелĕн 12-мĕшĕ – Космонавтика кунĕ. Çĕнтерӳ кунне эпир, паллах, курман, анчах та 1961 çулхи апрелĕн 12-мĕшне питĕ лайăх астăватăп. Çав кун эпир Çатракасси шкулĕнче 5-мĕш класра вĕренекенсем, каникул кунĕсем пулин те, шкула килнĕччĕ. Пирĕн, çамрăк натуралистсен (сад ăстисен), шкул садĕнче тĕрлĕ ĕç тумалла пулнă.

10 сехет тĕлĕнче шкул директорĕ пире хыттăн кăшкăрса чĕнсе илчĕ те хăйĕн кабинетне кĕртрĕ. Унта радиоприемник ларатчĕ. Директор çав самантра космосра пирĕн çĕршыв çынни Юрий Гагарин «Восток» караппа вĕçсе пыни пирки пĕлтерчĕ. Паллах пирĕншĕн, пĕтĕм совет халăхĕшĕн, çав кун та, космоса вĕçнĕ ытти кун та – асран тухми манăçми кунсем. Виççĕмĕш космонавт – пирĕн ентеш Андриян Николаев – космоса вĕçсен эпир вара хамăра чăннипех те телейлĕ туйнă. Ю. Гагарин, Г. Титов, А. Николаев тата темиçе летчик космонавтсен пĕрремĕш отрядĕнче космоса вĕçме хатĕрленнĕ пулнă, тĕрлĕрен тренировкăна хутшăннă. Андриянпа Юрий пĕр-пĕринпе яланах туслă пулнă.

Пирĕн районта космос темипе çыхăннă тĕрлĕ конкурс, ăмăрту кашни çулах ирттереççĕ. Вĕсемпе тĕплĕнрех паллашас тесе эпĕ çамрăк техниксен районти станцине çитрĕм. Станци директорĕпе Олег Юлинпа тĕл пулса калаçрăм. Сăмах май, хăй вăхăтĕнче вăл Байконур космодромĕ патĕнче çар службинче пулнă.

Олег Юрьевич каласа панă тăрăх, станци çумĕнчи «Авиамоделирование» тата «Ракетомоделирование» кружоксем ăнăçлă ĕçлеççĕ. Вĕсене Ю. Самушков тата И. Киршева ертсе пыраççĕ. Пирĕн районта ку енĕпе республика ăмăртăвĕсене те ирттeреççĕ. Паллах, пирĕн призерсемпе çĕнтерӳçĕсем те сахал мар. Пирĕн районти икĕ шкулта – Калайкассинчи А.Г. Николаев ячĕллĕ тата Юнкă шкулĕсенче çамрăк космонавтсен отрячĕсем пур. Вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе хаçатăн çитес номерĕсенче паллаштарма май пулĕ тетĕп.

Юрий Гагарин чăваш çĕршывне те килсе курма ĕмĕтленнĕ. Ун пирки вăл Андриян Николаевпа пĕр хут кăна мар сăмах хускатнă. «Вĕçĕ-хĕррисĕр уçлăхра» кĕнекинче А. Николаев çапла çырать: «Пĕррехинче мана Юрий Алексеевич çапла каларĕ: «Чăваш халăхне эпĕ лайăх ывăл ӳстернĕшĕн чунтан тав тăватăп...».

Ю. Гагарин космоса пĕрремĕш хут вĕçнĕренпе 10 çул çитнине халалласа Мускавра Кремльти съездсен керменĕнче 1971 çулхи апрелĕн 12-мĕшĕнче савăнăçлă пуху иртнĕ. Çӳллĕ трибуна умĕнче Андриян Николаев çак сăмахсене каланă: «Гагарин паттăрлăхĕ çыннăн ăс-тăнĕ тата çын алли тума пултарнă чи лайăххине ĕнентерӳллĕн кăтартса парать. Çак паттăрлăх историе ылтăн саспаллисемпе çырăнса юлнă».

**Г. МАЛЫГИН.**